Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

84 (8045) № ✻ Юн кун, 2012 ҫулхи юпа (октябрь) уйӑхӗн 31-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

## Ӗҫӗ пӗлтерӗшлӗ, ответлӑхӗ пысӑк

***Шӑпах ҫак сӑмахсемпе хак пама пулать паян суд приставӗсен ӗҫне-хӗлне. Суд йышӑнӑвӗсене пурнӑҫа кӗртесси, предприятисемпе организацисенчен, предпринимательсемпе уйрӑм ҫынсенчен тӗрлӗрен парӑмсене шыраса илесси, саккунпа пӑхнӑ йӗркелӗхе тивӗҫтересси, пӗлтерӗшли тата – тӗрлӗ шайри бюджетсене пурнӑҫлама пулӑшасси вӗсен пархатарлӑ ӗҫӗпе тӳрремӗнех ҫыхӑннӑ.***

***Сӑн ӳкерчӗкре эсир суд приставӗсен федераллӑ службин управленийӗн Чӑваш Республикинчи Муркаш районӗнчи пайӗн пристав-исполнителӗсене Сергей Самковпа Сергей Туритова куратӑр. Шанса панӑ ӗҫе ответлӑха туйса пурнӑҫлама хӑнӑхнӑ вӗсем.***

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Ноябрӗн 1-мӗшӗ – Суд приставӗн кунӗ



## Савӑнӑҫлӑ пуху – ноябрӗн 15-мӗшӗнче

**Ноябрӗн 2-мӗшӗнче Чӑваш патшалӑх оперӑпа балет театрӗнче Ял хуҫалӑхӗнче тата продукци тирпейлекен промышленноҫра ӗҫлекенсен кунӗ ячӗпе савӑнӑҫлӑ пуху иртет. Унта пирӗн район делегацийӗ те хутшӑнать. Унӑн шутӗнче малта пыракан механизаторсем, уй-хир ӗҫченӗсем, машинӑпа ӗне сӑвакан операторсем, ял хуҫалӑх отраслӗнче вӑй хуракан ытти пултарулӑ ӗҫченсем.**

Ял хуҫалӑх ӗҫченӗсене халалланӑ уява района ноябрӗн 15-мӗшӗнче районти Культура ҫуртӗнче ирттерме палӑртнӑ.

Нумаях пулмасть Муркашра ял хуҫалӑх продукцийӗ сутассипе ярмӑркӑ ирттернӗччӗ. Унӑн программи анлӑ та интереслӗ пулчӗ. Унпа продукци сутакан ял хуҫалӑх предприятийӗсем, хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсем тата уйрӑм хуҫалӑхсем кӑна мар, ял ҫыннисем те кӑмӑллӑ юлчӗҫ. Ҫак уява ун чухне шкулсем те, Муркашпа Мӑн Сӗнтӗр районвӗсен предприятийӗсем те, Муркаш «Кулибинӗсем» те, художество пултарулӑх коллективӗсем те активлӑ хутшӑнчӗҫ.

Ноябрӗн 15-мӗшӗнче вара савӑнӑҫлӑ пухура ҫӗр ӗҫченӗсем районӑн кӑҫалхи 10 уйӑхри экономикӑпа социаллӑ пурнӑҫ аталанӑвӗн итогӗсене пӗтӗмлетӗҫ, комбайнерсен, механизаторсен, водительсен, уй-хир бригадисен районти конкурсӗсенче мала тухнисене, ӗҫ паттӑрӗсене чыслӗҫ. Вӗсене савӑнӑҫлӑ лару-тӑрура дипломсемпе парнесем парӗҫ.

Уява ял хуҫалӑх отраслӗн ветеранӗсене те чӗнеҫҫӗ. Районӑн экономикӑпа социаллӑ пурнӑҫ аталанӑвӗн паянхи ӳсӗмӗсенче вӗсен тӳпи те пӗчӗк мар вӗтха. Савӑнӑҫлӑ пуху пуҫланиччен ҫӗнӗ технологи мелӗсене пурнӑҫа активлӑ кӗртсе пыракан предприятисене ҫитсе курма палӑртаҫҫӗ.

Ял хуҫалӑхӗнче тата продукци тирпейлекен промышленноҫра вӑй хуракансене халалланӑ савӑнӑҫлӑ пуху чӑваш эстрада ҫӑлтӑрӗсен тата районти художество пултарулӑх коллективӗсен концерчӗпе вӗҫленӗ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Грипа асӑрхаттарса

## «Гриппол» вакцина килсе ҫитнӗ

Районти тӗп больницӑран пӗлтернӗ тӑрӑх иртнӗ эрнере «Гриппол» вакцина килнӗ. Ку хутӗнче – аслисем валли 4058 доза. Вакцинӑна тӗллевлӗ усӑ курма ярса панине палӑртрӗҫ больницӑра. Педагогсене, медицина ӗҫченӗсене, транспортпа ӗҫлекенсене, 60-тан иртнӗ ҫынсене тата тӗрлӗ чир-чӗрпе врачсем патӗнче учетра тӑракансене прививка тума палӑртнӑ.

Шкулта вӗренекенсене тата ача сачӗсене ҫӳрекенсене прививка тӑвас ӗҫ вӗҫленсе пырать.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Вӗрентӳ учрежденийӗсенче

## Медицина пӳлӗмӗсем хатӗр

Пирӗн района 26 шкул, 15 ача сачӗ тата хушма пӗлӳ паракан 4 учреждени. Санитарипе гигиена требованийӗсем ыйтнипе кашни вӗренӳ учрежденийӗнчех медицина пӳлӗмӗ ӗҫлемелле.

Район администрацийӗн вӗрентӳ тата ҫамрӑксен политикин пайӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне 10 шкул тата 11 ача сачӗ ҫак енӗпе ӗҫлеме лицензи илнӗ. Республикӑн Сывлӑх сыхлавӗпе социаллӑ аталану министерствин лицензи пайне тата тепӗр 7 шкул кирлӗ документсем тӑратнӑ. Тепӗр пилӗк шкулпа икӗ ача сачӗ «Роспотребнадзора» заявкӑсемпе тухнӑ.

Анаткассинчи пуҫламӑш шкул – ача сачӗ, «Незабудка» ача сачӗ тата тепӗр тӑватӑ шкул – Шомикри, Ярапайкассинчи, Кашмашри тата Мӑн Хураҫкари шкулсем – медицина пӳлӗмӗсем йӗркелемесӗрех сывлӑх сыхлав учрежденийӗпе килӗшӳсем туса ӗҫлӗҫ. Мӗншӗн тесен вӗсем пӗр-пӗринчен ҫывӑхра вырнаҫнӑ.

Вӗренӳ модернизацийӗн программипе килӗшӳллӗн медицина пӳлӗмӗсем валли оборудовани пирӗн района ҫитнӗ ӗнтӗ, пӳлӗмсене кирлӗ хатӗрсемпе комплектланӑ. Ҫулталӑк вӗҫлениччен медицина ӗҫ-хӗлӗ валли лицензисем илсе пӗтерме шанаҫҫӗ вӗрентӳ пайӗнче. Медицина пӳлӗмӗсенче сывлӑх сыхлав учрежденийӗсенче вӑй хуракансем ӗҫлӗҫ.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

## Гражданасене йышӑнаҫҫӗ

***«Единая Россия» партин вырӑнти политканашӗн обществӑлла йышӑну пӳлӗмӗнче (Муркаш ялӗ, Мир урамӗ, 9А ҫурт) гражданасене ноябрь уйӑхӗнче йышӑнаҫҫӗ.***

**Ноябрӗн 6-мӗшӗнче** – Владимир Мидуков, ЧР Патшалӑх Канашӗн депутачӗ.

**Ноябрӗн 9-мӗшӗнче** – Ростислав Тимофеев, «Единая Россия» партин вырӑнти уйрӑмӗн секретарӗ, район администрацийӗн пуҫлӑхӗ.

**Ноябрӗн 13-мӗшӗнче** – Игорь Николаев, район пуҫлӑхӗ, депутатсен районти Пухӑвӗн председателӗ, Ильич ят. хис. СХПК ертӳҫи, партин вырӑнти политканашӗн членӗ.

**Ноябрӗн 16-мӗшӗнче** – Владислав Ананьев, район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ, партин вырӑнти уйрӑмӗн секретарӗн ҫумӗ.

**Ноябрӗн 20-мӗшӗнче** – Николай Ванеркин, ЧР Патшалӑх Канашӗн депутачӗ, партин вырӑнти политканашӗн членӗ.

**Ноябрӗн 23-мӗшӗнче** – Владислав Семенов, депутатсен районти Пухӑвӗн депутачӗ, «МСО «Моргаушская» ЗАО генеральнӑй директорӗ, партин вырӑнти политканашӗн членӗ.

**Ноябрӗн 27-мӗшӗнче** – Лилия Тарасова, район администрацийӗн пуҫлӑхӗн социаллӑ аталану енӗпе ӗҫлекен ҫумӗ, пай пуҫлӑхӗ, парти членӗ.

Гражданасене асӑннӑ кунсенче 13 сехетрен тытӑнса 15 сехетчен йышӑнаҫҫӗ.

Тирпей-илем

## Раҫҫейре – виҫҫӗмӗш

Чӑваш Еншӗн Раҫҫейри халӑх пурӑнакан чи хӑтлӑ хула е яла палӑртассипе ирттерекен конкурс питех те пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрать. Республика тӗп хули асӑннӑ конкурсра пӗрре кӑна мар ҫӗнтерӳҫӗ пулса тӑнӑччӗ. 2011 ҫул итогӗсене вара Раҫҫей Правительствин ларӑвӗнче октябрӗн 25-мӗшӗнче пӗтӗмлетнӗ. РФ Регионсен аталанӑвӗн министерствин сайтӗнче палӑртнӑ тӑрӑх лауреатсем хушшинче Муркаш ялӗ те пур.

Муркаш район центрӗ «3000 тытӑнса 5000 таран ҫын пурӑнакан ял» номинацире палӑрнӑ, виҫҫӗмӗш вырӑн ҫӗнсе илнӗ. Ҫавна май район центрӗ хисеплӗ диплома тата Раҫҫей Правительствин премине тивӗҫет. Асӑннӑ категорире Калуга облаҫӗнчи Хвастовичи тата Ямал-Ненецк автономи округӗнчи Ханымей маларах пулнӑ. Муркашсемпе пӗрле виҫҫӗмӗш вырӑна Калуга облаҫӗнчи Перемышль ялӗ пайланӑ.

Раҫҫей регионӗсен центрти хулисем хушшинче чи хӑтлӑ хула Саранск пулса тӑнӑ. Иккӗмӗш вырӑнта – Ульяновскпа Томск, виҫҫӗмӗшӗнче – Махачкала, Барнаул тата Белгород. Конкурса пӗтӗмпе муниципаллӑ 105 йӗркелӳ хутшӑннӑ. Итогсене пӗтӗмлетнӗ чухне пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑхри, экологи тӗлӗшӗнчи лару-тӑрӑва, пӗчӗк бизнеса пулӑшса тӑнине, хута яракан ҫуртсен илемлӗх шайне шута илнӗ.

**А. БОКОВ.**

Фермӑсем хӗл умӗн

## Сӑвӑм шухӑшлаттарать

Районти пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсенче юпа уйӑхӗн 26-мӗшӗ тӗлне пӗр ӗне пуҫне вӑтам сӑвӑм мӗнле пулнине пӑхсан Суворов ят. хис. хуҫалӑхра ҫак кӑтарту 14,8 кг, Чкалов ят. хис. хуҫалӑхра 14 килогрампа танлашни курӑнать. Ҫак кӑтартусем ҫулталӑк каяллахинчен 1,5 тата 4,5 килограмм нумайрах. Ҫав вӑхӑтрах «Ударник», Чапаев ят. хис., «Передовик» хуҫалӑхсенче вӑтам сӑвӑм виҫӗ хут та пӗчӗкрех. Танлаштарма, районӑн вӑтам кӑтартӑвӗ – 9,6 килограмм.

Обществӑлла вылӑх-чӗрлӗх патӗнче вӑй хуракансемшӗн хӗле кӗрес умӗнхи чи канӑҫсӑр кунсем пыраҫҫӗ. Ӗнер улӑхра ҫӳренӗ вылӑхсене витере тытса тӑратас тапхӑр пуҫланать. Ҫаврӑнӑҫуллисем ҫу кунӗсенче вылӑх-чӗрлӗх апатне ҫителӗклӗ янтӑлама ӗлкӗрнӗ темелле. Анчах апат пуррине пӑхмасӑрах пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсем ӗне кӗтӗвне ӳстерме тӑрӑшни сисӗнмест. Ҫулталӑк каялла ял хуҫалӑх производство кооперативӗсенче 2152 пуҫ сумалли ӗне тӑнӑ пулсан, кӑҫал вӗсен йышӗ 161 пуҫ сахалрах.

Районти ял хуҫалӑх производство кооперативӗсем паян талӑксерен пӗтӗмпе 19164 килограмм сӗт сӑваҫҫӗ. Ку вӑл иртнӗ ҫулхинчен 105 килограмм сахалрах.

**А. ПЕТРОВ.**

Ачасен канӑвӗпе сывлӑхӗ

## Каникулта та лагерьсем ӗҫлӗҫ

Ачасен сывлӑхне ҫирӗплетесси ҫине юлашки ҫулсенче тимлӗх ытларах уйӑрни палӑрать. Акӑ кӑҫал та районта ҫак тӗллевпе 4 миллион тенкӗ ытла усӑ курнӑ.

Ҫуллахи тапхӑрта хула тулашӗнчи лагерьсенче канман, йывӑр лару-тӑрулӑ ҫемьесенче ҫитӗнекен ачасем ҫитес кунсенче лагерьсене кайӗҫ. Кун пирки район администрацийӗн вӗрентӳ тата ҫамрӑксен политикин пайӗнчен пӗлтерчӗҫ.

Ноябрӗн 4–10-мӗшӗсенче «Чайка» лагерьте пирӗн районти 30 ача канӗ. Шупашкарта вырнаҫнӑ ҫулталӑкӗпех ӗҫлекен «Жемчужина» лагере ноябрӗн 8-мӗшӗнче 23 ача каймалла. Вӗсем каялла ноябрӗн 14-мӗшӗнче таврӑнӗҫ. Кунсӑр пуҫне районти шкулсем ҫумӗнче кӗркуннехи каникул вӑхӑтӗнче профиль лагерӗсем ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсен ӗҫ программисене хатӗрленӗ, ҫак кунсенче ҫирӗплетеҫҫӗ. Каникулта ҫак лагерьсене пурӗ 350 ача ҫӳрӗ.

**Н. АНДРЕЕВА.**

## Саккунсене пӑхӑннин ыйтӑвӗсемпе

***Чӑваш Енре октябрӗн 29-мӗшӗнчен тытӑнса декабрӗн 7-мӗшӗччен Раҫҫей Федерацийӗн Генеральнӑй прокурорӗн вӑхӑтлӑх йышӑну пӳлӗмӗ ӗҫлет. Вӑл Шупашкарта Карл Маркс урамӗнче республика прокуратурин 48-мӗш номерлӗ ҫуртӗнче вырнаҫнӑ. Гражданасене пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх сферинче саккунсене мӗнле пӑхӑннин ыйтӑвӗсемпе йышӑнаҫҫӗ.***

# Ултавçăсене ан ĕненĕр!

**Прокуратурăран**

Ултав мелĕпе услам тăвакансем уйрăмах аслă ăрури çынсен тимсĕрлĕхĕпе усă кураççĕ. Шанăça кĕме хăтланакансем хăйсене ытларах чухне социаллă ĕçченсем вырăнне хураççĕ, сăпайлă тата шанчăклă калаçаççĕ, пысăк пулăшу сĕнеççĕ – чике тăршшĕ лартса хăвараççĕ.

Акă çакăн пек тĕслĕхе прокуратурăри ĕç тăрăх каласа парам. Анук аппа (ятне улăштарнă) ялти хуçалăхра пĕчченех пурăнать, тивĕçлĕ канăва тухнă ĕнтĕ. Вăл уйăхсерен 9 пин тенкĕ пенси укçи илсе тăрать. Ватă çын укçана ытлашши тăкакламасть, пухса пырать. Хĕрлĕ тĕслĕ пухмач-енчĕке вара çирĕп йăлана кĕнĕ тăрăх матрац айне хурать – ара унта 56 пин тенкĕ укça вĕт. Ватă çынсенчен чылайăшĕ ку вырăна чи шанчăкли тесе шутлать.

Кăçал пахча çимĕç тулăх пулчĕ, вăхăтра пуçтар кăна. Анук аппа та иртен пуçласа кăнтăр апачĕччен унта тăрмашрĕ. Вăхăтлăх пÿрте кĕчĕ те каялла тухса кайма ĕлкĕреймерĕ, картишĕнче 25 – 30 çулсенчи палламан икĕ арçынна курчĕ.

– Кинемей, эпир социаллă пулăшу пайĕнчен килтĕмĕр. Çитес вăхăтра сана валли çĕнĕ телевизор, холодильник кÿрсе килетпĕр, – терĕç вĕсем. Хăйсемпе пĕрле удостоверени йышши те пур иккен вĕсен, анчах та çынна шанма хăнăхнă кинемей ăна пăхмасть те.

Кун пек «ырă ĕçченсене» епле-ха пÿрте кĕме сĕнмĕн. Тепĕр тесен ун йышшисем хăйсемех аван кĕреççĕ тата кил хуçине пĕрле кĕме ыйтма пултараççĕ. Çавăн пекех сăпайлă «социаллă ĕçченсем» ытти пулăшăва та сĕнчĕç Анук аппана, йăлтах пурнăçлансан савăнмалла кăна.

Хайхискерсем пĕрпĕрин хушшинче вырăсла, чăвашла калаçаççĕ, анчах хăйсене ятран асăнмаççĕ. Вĕсенчен пĕри Анук аппан документĕнчесене пăхкаларĕ, унти хăш-пĕр самантсене хăй патне çырса хучĕ. Теприн вара пÿлĕм калăпăшне виçрĕ, ара вĕсем унта электропралук улăштарма, обой çыпăçтарма та шантарнă вĕт. Çапла вара Анук аппан вĕсене 4 пин тенкĕ укçа тÿлемелле пулчĕ. Вăр-вар кинемей нумай кĕттермерĕ, васкасах сывăрмалли пÿлĕме кĕчĕ, укçана кирлĕ чухлĕ илчĕ те ыттине каялла хучĕ. Хăй çапах та иккĕленчĕ-ха, чăнах та кусем пулăшуçăсемех-ши? Çапла вара ĕçченсем кирлĕ материала кÿрсе килме шантарчĕç, укçине çавăн чухне тÿлемелле каласа таталчĕç.

«Социаллă ĕçченсен» чылай çĕре çитмелле, пĕр çын патĕнче кăна чарăнмалла мар вĕт. Вĕсем Анук аппана ăсатма ыйтрĕç, хăйсем вара кинемейрен малтан тухрĕç. Ăсатнă хыççăн ватă çын алăри укçана каялла хурас тесе çывăрмалли пÿлĕме кĕчĕ. Алă вара матрац айĕнче пухмач-енчĕке шырарĕ, анчах... Çапла вара «ырă пулăшуçăсем» 52 пин тенкĕлĕ пулчĕç, Анук аппа 4 пин тенкĕпе тăрса юлчĕ! Çак саманта тимсĕрлĕх шайĕнче хакламалла е..?

***Район прокуратури пурне те асăрханулăрах пулма ыйтать. Кайран ÿкĕнчичен, малтан тимлĕ пулни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ пуриншĕн те ăнланмалла. Унта çурт-йĕр уйрăм çын харпăрлăхĕ пулнине аван çырнă. Çавна май унта ирĕксĕр кĕме, хуçаланма никамăн та сăлтав çук. Ултавçăсем хăйсене социаллă ĕçченсем, пенси фончĕн специалисчĕсем, газооператорсем вырăнне хума пултараççĕ. Çавăнпа та вĕсен уйрăм паллисене, автомашина номерĕсене астуса юлма тăрăшăр.***

***Унсăр пуçне телефонпа улталакансем те пур. Вĕсем сирĕн тăванна инкек пулнине пĕлтереççĕ, ăна çăлма укçа ыйтаççĕ. Ан манăр, ку – ултав серепи. Кунта каллех ытларах ватă çынсем тăкак тÿсеççĕ. Ăнланмалла, çывăх çын инкеке лекни кирек кама та çухатса ярать. Çавăнпа та чи малтан çывăх çын, пĕлĕш патне хăвăр шăнкăравласа пăхăр.***

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Шупашкарта курав ĕçлет

**Пултарулăх**



Чăваш Республикинчи Халăх пултарулăх çуртĕнче 6 Х 7 галерейăра Муркаш районĕнчи ал ĕç ăстисен куравĕ октябрĕн 18-мĕшĕнче уçăлчĕ. Унăн ĕçĕ ноябрĕн 17-мĕшĕччен тăсăлĕ. Кунта П. Мазуркин, Л. Родионова, А. Скворцова, С. Рожкова тата ытти ăстаçăсен тĕрлĕ эрешĕпе паллашма пулать.

Акă Муркаш шкулĕнче 8-мĕш класра вĕренекен Анастасия Васильевăпа унăн амăшĕ Людмила Вячеславовна кунта пластикран ăсталанă пилĕк пукане тăратнă. Ку туртăм ăçтан пуçланчĕ-ха тесе ыйтрăм эпĕ Л. Васильевăран.

– Пластикран пуканесем ăсталасси педагогика университетĕнче художествăпа графика факультетĕнче пĕлÿ пухнă чухне пуçланчĕ. Диплом ĕçĕ валли чăваш тумĕллĕ арçынпа хĕрарăм хатĕрлерĕм. Вĕсене ăсталама пĕр çул кирлĕ пулчĕ. Эпĕ пуканесем ăсталанине кура ман хыççăн хамăн ачасем те туртăнма пуçларĕç. Халĕ вĕсем йăлтах хăйсем ĕçлеççĕ. Пĕр кĕлетке хатĕрлес пулсан 2 – 3 уйăх та кирлĕ. Паллах çакă пуканен кăткăслăхĕнчен чылай килет. Эпир вĕсене сутлăх валли хатĕрлеместпĕр, парнелеме те питĕ кăмăллă, – каласа парать Людмила Вячеславовна.

Палăртма кăмăллă, Настя республика шайĕнчи конкурссене тăтăш хутшăнать. Кăçал вара вăл «Искусство – ачасен аллипе» куравра та хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарма пултарчĕ. «Пир-авăр тетте» номинацире 2 степень диплома тивĕçрĕ. Настьăн йăмăкĕ те ал ĕçĕпе кăсăкланать. Аппăшне тата амăшне тĕрлĕ пукане тума пулăшать. Хăй те уйрăммăн ĕçлет.

Ал ĕçĕнче пластикпа усă курасси – хăйне майлă çĕнĕлĕх. Вăл ку тĕлĕшре анлă сарăлма ĕлкĕрмен. Тĕслĕхрен, тăмран тĕрлĕ шăхлич-тетте ăсталасси мĕн авалах пулнă, каярах вара – пластилинран тата ыттинчен. Ку материалтан ăсталанă мĕлкесене, пукенесене пысăк хак параççĕ.

– Çапах та мана тĕрлĕ ăсталăха вĕрентекенĕ, хăнăхтараканĕ – анне. Çавăнпа та чи малтанах ăна пысăк тав, – терĕ Настя хăй ăсталăхĕпе республика шайĕнче те паллаштарма пултарнă май.

Вăхăт тупса курава çитсе килер. Хамăр ентешсен ăсталăхĕпе паллашар.

**Р. МАКАРОВА.**



# Юратнă тăван кĕтес – Ильинка сали

**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ малтанхи номерсенче.)**

1898 çулта утă уйăхĕн 17-мĕшĕнче ирхи 5 сехете ял халăхĕ медицина профессорне Любимова кĕтнĕ. Вăл хăйĕн дачине мăшăрĕпе килмелле пулнă. (Кайран çак çын Хусан университечĕн ректорĕ пулнă). Чанăн ирхи сасси хаклă хăнасем Иоанн Кронштадский, Геннадий атте, Любимов профессорпа мăшăрĕ килнине пĕлтернĕ. Вĕсем кунти чиркÿре юсав ĕçĕсем ирттерме укçа та парса хăварнă. Чиркĕве тухнă халăх çакна курса савăннă.

Виççĕмĕш гильди купсисем П. Толстов, М. Мартьянов, П. Плахин ял хитрелĕхĕшĕн, сăн-сăпачĕшĕн нумай вăй хунă. Халăха сутта кăларас ĕçре Раиса Васильевна Пандиковăн тата унăн хĕрĕсен Людмилăпа Серафимăн тÿпи пысăк.

Ильинкăра илемлĕ 6 дача пулнă: Любимов профессорăн, Берт профессорăн, Троянов врачăн, Хусанти Евдокимов инженерăн, Н. Ливановăн, Хусанти медицина профессорĕн Всеволод Первушинăн.

1912 çулччен Ильинкăра Хусан лесничествин лесничийĕ Елухин пурăннă. 24 çул Ильинкăра чаплă вăрмана Б. Гузовский ĕçлесе пурăннă. Тĕрлĕ вăхăтра (1917 çулччен) Ильинкăна художниксем килсе пурăннă. Василий Смирнов художникăн «Мельница», «Ильинка» картинисем Третьяковкăра упранаççĕ.

1920–1931 çулсенче кунта Раççейăн тата Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕн Розалия Михайловна Ермолаевăн ачалăхĕ иртнĕ.

1929 çулта Ильинкăра кану çурчĕ уçнă.

1941 çулхи чÿк уйăхĕнче Ильинкăран инçех мар виçĕ пăрахут чарăннă. Унта Ленинград тата Мускав хулисенчен эвакуациленĕ 1,5 пин çын пулнă. Б. Гузовский çурчĕпе юнашар «Морской флот» редакци ĕçченĕсем пурăннă. Куçса килнисен ачисем вырăнти шкулта вĕреннĕ. 1942 çулта 7 çул вĕренмелли шкула 8 çул вĕренмелли туса хунă. Директорĕ Владимир Александрович Верещагин пулнă.

1941 çулта чÿк уйăхĕнче Атăл тăрăх хăпарнă нимĕç самолечĕ Ильинкăри кану çуртне пулеметран пенĕ, Дубовое ялĕнчи леспромхоз столовăйĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Вăрçă хыççăн пĕтĕм çĕр-шыв вăрçă суранĕсенчен сипленнĕ, ишĕлнĕ хуçалăха йĕркене кĕртнĕ. Ильинкăри кану çурчĕ те çĕнĕрен ĕçлесе ярать. Ял сăн-сăпачĕ те улшăнать. Ильинкăри шкул ачисем «Вторжение» кинофильм ÿкернĕ çĕре хутшăннă. 90-мĕш çулсенче кунта Çĕнĕ Шупашкарти çурт-йĕр тăвакан комбинатăн пионерлагерĕ те ĕçленĕ.

1996 çулта Ильинкăра артезиан çăлĕ алтсан сероводород шывне тупнă. Кану çуртне çулталăкĕпех ĕçлекен сиплев кану учрежденийĕ тăвас тесе те нумай тăрăшрĕç, анчах 90-мĕш çулсенчи асар-писер пулăмсем çак ĕмĕте пурнăçланма памарĕç. Хальхи вăхăтра вара Ильинкăри курорт зони тата тĕрлĕ тиевлĕ шыв транспортне йышăнмалли причал тăвас проекта пурнăçлассипе тăрăшаççĕ.

**И. КАРГИН,**
**Ильинкăри вăтам шкулти истори учителĕ.**

**Саламлатпăр**



Пирĕн юратнă мăшăра, аннене, асаннене – Юнкăпуç ялĕнче пурăнакан **Вера Егоровна ЛАЗАРЕВĂНА** 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Эсĕ пурри – пирĕншĕн пысăк телей тата пуянлăх. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей сунатпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрÿшĕ, 5 мăнукĕ, тăванĕсем, пускилĕсем.**

Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă ырă кăмăллă аннене, кукамая, тăванăмăра – Автанкассинче пурăнакан **Мария Трофимовна МИХАЙЛОВĂНА** 80 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, савăнăç сунатпăр. Пире, ачусене, çуратса тĕрĕс-тĕкел ÿстернĕшĕн тав тăватпăр, лăпкă ватлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрÿшĕсем, ывăлĕ, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕ, хăтисемпе тăхлачисем.**



Канаш выççăлккинче пурăнакан **Михаил Никифорович ПШАНОВ** ноябрĕн 1-мĕшĕнче 80 çул тултарать. Юратнă аттене, кукаçа, маçака юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу тата вăрăм кун-çул сунатпăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр, пире пулăшса тăнăшăн тав тăватпăр.

**Салампа: хĕрĕ, икĕ ывăлĕ, кĕрÿшĕ, кинĕ, мăнукĕсем.**



Юратнă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçие – Муркашра пурăнакан **Юрий Анатольевич РЫЖКОВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, телей, канлĕ ватлăх сунатпăр. Санăн пурнăçунта ытларах телейлĕ, савăнăçлă самантсем пулччăр. Мăшăрупа, ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 3 ывăлĕпе 3 кинĕ, 3 хĕрĕпе 3 кĕрÿшĕ, 9 мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**



Муркашра пурăнакан юратнă аннене, кăмăллă хунямана, ытарайми кукамайпа асаннене, аппана тата çывăх тăванăмăра – **Мария Семеновна РОЖКОВĂНА** 75 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Ĕç ĕмĕрĕнче ĕçрен тата çынна пулăшасран пăрăнманскерне малашне те тату пурнăç, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр. Пурнăç çулĕ такăр та вăрăм пултăр, чир-чĕр санран пăрăнса ирттĕр. Ачусене пурнăç çулĕ çине кăларма çăмăл пулман пулин те, эсĕ йывăрлăхсем умĕнче алă усман. Çакăншăн эпир сана чун-чĕререн тав тăватпăр.

**Саламлаканĕсем: Сютруковсемпе Рожковсен, Аксендаровсен, Федькинсен çемйисем.**

**ГИБДД асăрхаттарать**

# Инкексем нумай пулнăран

Юлашки вăхăтра пирĕн районти çул-йĕр çинче аварисен хисепĕ ÿсни пăшăрхантарать. Акă тăхăр уйăхри кăтартусене тишкерни инкексем пĕлтĕрхи çак вăхăтрипе танлаштарсан 25 процент ытларах пулни палăрчĕ. Республикăри кăтарту – 19,2 процент. Çавăнпа та çулйĕр çинчи, уйрăмах час-часах аварисем пулакан вырăнсенчи инкексене асăрхаттарас тĕллевпе «Маячок» условлă ят панă тĕллевлĕ акци иртет. Октябрĕн 15-мĕшĕнче пуçланнăскер, вăл декабрĕн 31-мĕшĕнче вĕçленет.

Акци вăхăтĕнче М–7 Мускав – Етхĕ федераллă трассăн районта иртекен лаптăкĕ çинчи инкексем часчасах пулакан вырăнсене полици нарядĕсем çитмелли вырăнсене палăртнă. Пур оперативлă машина та патруль маршручĕсем çинче водительсен тата çуран çÿрекенсен тимлĕхне ÿстерес тĕллевпе çутăлса сÿнекен хунарсене ĕçлеттерет.

**С. ИВАНОВ,**
**патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти пуçлăхĕ.**

**Редакци почтинчен**

# Кĕр уявĕ усăллă та хаваслă иртрĕ

Ильинкăри вăтам шкулта кĕр уявĕ питĕ интереслĕ иртрĕ. Аслă классенче вĕренекенсем кĕр балĕнче савăнчĕç, вăтам класрисем те юрларĕç, ташларĕç. Эпир вара, кĕçĕн класра вĕренекенсемпе вĕсен вĕрентекенĕсем, калаçма юратакан карчăк патĕнче хăнара пултăмăр.

Хăнара ачасем пахчари пур çимĕçе те паллаштарĕç, карчăка сăвăсем вуласа пачĕç. Кĕр пикипе пĕрле ачасем тĕрлĕ вăййа хутшăнчĕç. Питĕ çаврăнăçуллă та пултаруллă вĕсем пирĕн. Айпипи тухтăр вара ачасене кашни çимĕçĕн усси пирки пĕлтерчĕ. Çакăн пек пысăк ĕç хыççăн ачасем киле кайма шутларĕç. Карчăк кашни класах пылак кукăльпе сăйларĕ.

Кĕр уявĕн тепĕр пайĕ ачасем хатĕрленĕ ĕçсен куравĕ пулчĕ. Çулсеренех кураври ĕçсем пахалăхĕпе хăпартлантарать пыраççĕ. 1 класра вĕренекен Володя Ялтеевăн, 3 класра вĕренекен Оля Расковăн ĕçĕсем питĕ интереслĕ пулчĕç. Людмила Васильевна вĕренекенсен хатĕрленĕ темĕн тĕрлĕ чечек çыххи те куçа илĕртсех тăчĕ.

**Г. АНИСОВА,**
**пуçламăш классене вĕрентекен.**

# Ыранхи куна пăхса ĕçлени палăрчĕ

Ял хуçалăх техникине – хĕллехи управа



Вăхăт утти хăвăртлăхне чакармасть. Сисмесĕрех чӳк уйăхĕ ума тухрĕ. Уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ май паян çĕр ĕçченĕ хĕл ăшши тытассипе тимлет. Ку ĕç-хĕл уй-хир ĕçĕсене явăçтарнă ял хуçалăх техникишĕн те паян айккинче юлмалла мар. Çапла калатпăр, ăна ăнланатпăр, анчах ĕçне тума тăрсан... Ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартассипе ларутăру çулленех йывăр. Ку ĕç ун çине пĕччен-иккĕн çеç пăхсан çăмăлланмĕ те. Çавăнпа та çĕр-шыв Пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацине кĕнĕ май агропромышленность комплексне аталантарассипе çанă тавăрса ĕçлесси вăй илмелле. Çĕр ĕçченĕ тĕлĕшпе патшалăх пулăшăвĕ ӳссе пынă вăхăтра ял хуçалăх техникипе перекетлĕ те тирпейлĕ пуласси – кашнин умĕнче тăракан тĕллев. Кăçал ĕçленĕ техника çитес çул та хамăрах кирлĕ пулать-çке.

Хура кĕркуннепе хĕл чиккинче тăратпăр. Малашлăха пăхса ĕçлекен ял хуçалăх техникине хĕллехи управа вырнаçтарса пĕтернĕ те ĕнтĕ. Анчах тĕрĕслевсем ирттернĕ чух час-часах çăкăр тума пулăшакан техника çине алă сулнă тĕслĕхсем те куç умне пулаççĕ. Паянхи калаçу вара çитменлĕхсем пирки мар, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулакансем çинчен.

Ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартнине тĕрĕслес ыйтупа юпа уйăхĕн 25-мĕшĕнче районта Чăваш Республикин Патшалăх техника надзор инспекцийĕн ертӳçи В. Димитриев пулчĕ. Владимир Павлович вырăнсене тухса кам епле ĕçленипе тĕплĕн паллашрĕ.

– Техникăна кĕр çитсен нумай вăхăтлăха упрама тирпейлĕ лартни хресчене çур акире тата выльăх апачĕ хатĕрлес тапхăрта ĕçсене вăхăтра та пахалăхлă пурнăçлама пулăшнине пĕлетпĕр. Кунпа пĕрлех энерги перекетлекен техникăпа çĕнĕ технологисем çине куçасси те техникăна çирĕп упрама ыйтать. Çакна кун йĕркинчен кăларман хуçалăхсем ыранхи кунпа пурăнаççĕ тесе çирĕплетме пулать, – терĕ вăл Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн мехпаркĕнче пулса курсан.

Ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартассипе тунă ырă пуçарăва Суворов яч. хис. хуçалăхра кашни утăмрах тĕл пултăмăр. Р. Кузнецов комбайнерпа унăн пулăшаканĕ Ю. Орлов хăйсем ĕçленĕ «Акрос-530» комбайна питĕ типтерлĕ управа лартнă. Ăна тин çеç заводран илсе килнĕ тейĕн. Кĕрхи çумăрсемпе юр пĕрчисем комбайншăн хăрушă мар ĕнтĕ. Тасатса тирпейленĕ машина-трактор паркĕнче хĕллехи управа лартнă ытти техника тĕлĕшпе те механизаторсем тăрăшса ĕçлени куç умĕнчех. Ĕнер хирте пулнă «хурçă утсем» те, ака агрегачĕсемпе суха пуçĕсем те, çĕр хатĕрлемелли техника хатĕрĕсемпе çу кунĕсенче выльăх апачĕ янтăламалли техника та управа тирпейлĕ вырнаçнине пăхма кăмăллă. Вĕсем хăш-пĕр çĕрти пек калча айĕнче ларманни, çуталакан штоксемпе инçетрен илĕртменни, бункерсенче тырă управа хăварманни асăннă хуçалăх çĕнĕ условисенче аталану çулĕ çине тимлĕ пăхнине çирĕплетет. Савăнтарать çакă. Ĕçлекен çын малаллах пăхать, пурнăçпа тан пыма çĕнĕлĕхсене алла илнипе пĕрлех перекетлĕх пирки те манмасть. Çапла пулмалла та. Çак пĕтĕмлетӳпе тухрăмăр эпир Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн хĕç тимĕр картапа çавăрнă мехпаркĕнчен.

Анаткассисен ырă ĕçне районта ыттисен те алла илсен тем пекехчĕ.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**ЧР патшалăх техника надзор инспекцийĕн районти инспекторĕ;**
**А. БЕЛОВ,**
**район хаçачĕн экономика пайĕн редакторĕ.**

01 пĕлтерет, асăрхаттарать

# Хĕл сиввисем умĕн

Чӳк уйăхне çитнĕ май черетлĕ хĕл тапхăрĕ умра пулни куç кĕрет. Ку вăхăт вара пушар хăрушлăхĕпе ытти тапхăрсенчен самай пуянрах. Апла пулсан асăрханулăха пурин те çӳллĕрех шайра тытмалла пулать. Çапла калатпăр, çакна пĕлетпĕр, анчах... Пушар хăрушсăрлăх правилисене сивĕ вăхăтсем çитнĕ май пăхăнманни уйрăмах пысăк инкек патне илсе çитерет: вăй илнĕ «хĕрлĕ автан» тыткăнĕнче шартлама сивĕре пурăнмалли çуртсем, витесемпе сарайсем, мунчасем кĕлленеççĕ, çынсен пурнăçĕ таталать.

Халĕ каланине çирĕплетекен пĕр тĕслĕх. Юпа уйăхĕн 11-мĕшĕ. 1 сехет те 10 минут. Пушар хуралне Торинкасси ялĕнче «хĕрлĕ автан» авăтма пуçлани пирки хыпар çитрĕ. Вырăна çийĕнчех 4 пушар машини кăлартăмăр. Анчах эпир çитнĕ çĕре П. гражданинăн 6х9,5 метр калăпăшлă йывăç çуртне пĕтĕмпех çулăм ярса илнĕччĕ ĕнтĕ. Çулăма ытти хуралтăсем çине кайма памарăмăр пулин те «хĕрлĕ автана» çăварлăхласан пушарта кил хуçин пурнăçĕ татăлни паллă пулчĕ. Инкеке тĕпчени пушар кил хуçи ӳсĕрле пирус туртнинчен тухма пултарни пирки калать. Çакă нумайăшĕшĕн урок пулĕ тесе шутлатăп.

Çуртсене хутса ăшăтмалли тата электричествăпа ытларах усă курмалли тапхăр пуçланнăран кăмакасемпе электричество кабелĕсен юсавлăхĕ малти вырăна тухса тăрать. Унччен хĕл тапхăрĕсене тишкерсен те пушар юсавсăр кăмакасемпе мăрьесенчен тата электрокабельсенчен хăйĕн çулне нумай уçни курăнать. Çавăнпа та хĕле кĕнĕ май юлнă ăшă кунсенче вĕсен юсавлăхне тепĕр хут тĕрĕслесе тухни никамшăн та ытлашши пулмĕ.

Юсавсăр кăмакаран пушар тухни иртнĕ кунсенче Шетмĕпуçĕнчи пĕр килти хушма хуçалăхра пулчĕ те. Кил хуçисем кивĕ кăмакапа усă курни пурăнмалли çурта кĕл турĕ.

Маларах илсе кăтартнă лару-тăрăва тишкерсе тата хак парса ял çыннисенчен, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсенчен, пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçисемпе специалисчĕсенчен вырăнсенче пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнма ыйтатăп. Кăмакасем умĕнчи урайне кăвар тухса ӳкесрен 0,5х0,7 метр калăпăшлă шăвăç çапни, кăмакасен юсавлăхне хĕле кĕриччен тĕрĕслени тата мăрьесене хăрăмран тасатни, кăмакасем çумĕнче хăвăрт çунмалли япаласем тытманни хăрушсăрлăх никĕсĕ пулса тăрать. Пӳртсене хутса ăшăтма харпăр хăй тĕллĕн хатĕрленĕ тимĕр кăмакасене йăпăртлăха пулсан та вырнаçтарма, хутнă кăмакасем патĕнче вутă-шанкăпа кĕпе-йĕм типĕтме, кăмакасене хутма ача-пăчана явăçтарма, çунакан кăмакана никам пăхмасăр пăрахса хăварма юрамасть.

Паянхи куна район территорийĕнче алхаснă 35 пушарта 6 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Танлаштарма, пĕлтĕр çак вăхăтра тухнă 34 пушарта 4 çын пурнăçран уйрăлнăччĕ.

**А. ИЗОНОВ,**
**патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

Патриотла воспитани



# Çирĕплĕх пурри курăнать çамрăксенче

**Иртнĕ эрне кун Муркашри вăтам шкулти 10 класра вĕренекен хăш-пĕр ачасене кадетсен ретне илчĕç.**

«...Вĕренӳре те, хамăра тытассинче те тĕслĕх пулма тупа тăватпăр...» – çакăн пек сăмахсем пур кадетсен тупинче. Хăйсен пурнăçĕн хальхи тапхăрĕнче çамрăксемшĕн ку сăмахсем чи пĕлтерĕшлисем пулса тăмалла. Çапла пуласси иккĕлентермест: кадетсен куçĕ ыттисенчен çуттăнрах çиçет, темĕнле çирĕплĕх пурри курăнать çак çамрăксенче. Тантăшĕсенче çак çирĕплĕх пуррине курсах вун пĕрмĕшĕнче вĕренекен тепĕр виçĕ ача та кадетсен йышне кĕме шутланă пулĕ.

Çак татăклă утăма тунă ятпа кам кăна саламламарĕ пуль кадетсене: районти ертӳçĕсем те, Шупашкартан килнĕ сумлă хăнасем те. Пакунсем илме тивĕçнĕ çамрăксене тĕп хулари ача-пăча полици академийĕнче вĕренекенсем те хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарса саламларĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Объявление

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

